# «Пурăннă вăхăт усăсăр иртмен»

***Кĕскен ăнлантарса пани: Платон Павлович Давыдов Анатри Панкли ялĕнче 1947 çулхи мартăн 10-мĕшĕнче çуралнă. Чăваш совет парти шкулне, Чулхулари ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ, ял хуçалăх производствин йĕркелӳçĕ-экономисчĕн специальноçне алла илнĕ. 1981 çултан тытăнса Муркаш районĕнчи тата Чăваш Республикинчи ăнăçлă ĕçлесе пыракан «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхне ертсе пырать. Паянхи сăмахăмăр – ун пирки.***

Паян асфальт сарнă тикĕс çулсемпе «Ударник» хуçалăха пырса кĕнĕ май, ял çыннисен хальхи хăтлă çурчĕсене, производство объекчĕсене, çĕр улмипе тыр-пулăн ешерекен хирĕсене пăхнă май кунта çирĕм çул каялла мĕн пулнине ĕненме те йывăр.

Юлашки вăхăтра хуçалăх территорийĕнчи ялсен сăнсăпачĕ тĕпрен çĕнелсе улшăнчĕ. Ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас, çамрăксене хуçалăхра ĕç тупса парас тĕллевпе 60 ытла хваттер, икĕ ача сачĕ, икĕ пуçламăш шкул тата пĕр вăтам шкул туса лартнă. Хальхи сутуилӳ центрне хута янă. Унта кафе-бар, столовăй, магазин, гостиница номерĕсем пур. Матьăк ялĕнчи Культура çуртĕнче спортпа туслисем валли спорт залĕ пур. Канакансем валли Анатри Панкли тата Вăрманкас ялĕсем патĕнче икĕ плотина тунă. Вăрçă тата ĕç ветеранĕсен сĕнĕвне тĕпе хурса тата Аслă Отечественнай вăрçăра вилнисене халалласа Амăшĕн монументне уçнă.

Платон Павлович хăйĕн ĕç биографине «Ленинец» хуçалăхра пуçланă. 1966–1969 çулсенче Совет Çарĕнче служба тăнă, хыççăн КПСС Элĕк тата Муркаш райкомĕсен инструкторĕнче ĕçленĕ.

Платон Павлович хăйĕн ял хуçалăхĕнчи активлă ĕçне-хĕлне 1974 çулта тытăннă тесе шутлать. Ун чухне ăна Уйкас Янасал ял Советĕнчи Ильич ячĕпе хисепленекен колхоз председательне суйлаççĕ. Район шайĕпе пăхсан, ку вăтам хуçалăх шутланнă. Ял хуçалăхĕнче усă курмалли çĕрсем 2 пин гектара яхăн, территорире 7 ял (Васкасси, Уйкас Янасал, Юрпаш, Купăрля, Кĕртекасси, Сосновка, Уйкас Апаш). Тĕп усадьба Уйкас Янасалта вырнаçнă, машинăпа трактор паркĕ вара Васкассинче пулнă. Кун пек чухне хуçалăха ертсе пырас ĕççене оперативлă туса пыма йывăртарах пулнă. Çавăнпа пĕрлех ялсем хушшинче тата район центрне çитме йĕркеллĕ çулсем пулманни те ура хунă. КПСС райкомĕн пленумĕсенче те, райĕçтавком сессийĕсенче те кун пирки сахал мар ыйту çĕкленĕ. Анчах та çак çула тума тытăнасси çав-çавах тăсăлса пынă. Тĕрĕссипе вара ăна тăвасси район аталанăвĕшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çула тума тытăнманнине «Знамя труда» хуçалăх ертӳçи, Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев хирĕç пулнипе сăлтавланă. Çапла вара икĕ çамрăк ертӳçĕ – Ильич ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ П.П. Давыдов тата Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ В.А. Иванов республикипех палăрнă «Знамя труда» колхоз председателĕ Е.А. Андреев патне Отарккă – Уйкас Янасал – Турай еннелле çул тăвас ыйтупа пынă. Сăмах май вăл çавăн пирки пĕлтернĕ: ку ыйтупа калаçусем тĕрлĕ шайри пысăк пуçлăхсемпе, районти пысăк форумсенче те пулнă, анчах унпа мар. Ял хуçалăхне аталантарассин ыйтăвĕсемпе вăл шутра çул тăвасси пирки те, чылай вăхăт калаçнă хыççăн, Евтихий Андреевич çак çулăн проектне тума тата çула тума тытăнма ирĕк панă, ку ĕçсене хăвăртрах пуçлама сĕннĕ. Çак кунран тытăнса ку çула тăвас ĕçсем пуçланнă. Проект ĕçĕсене пурнăçлама тытăннă хыççăн çулăн анлăшне сарма йышăннă. Çавна валли 1977 çулхи август уйăхĕнче скреперсемлĕ ДТ-75 маркăллă 7 трактортан отряд йĕркеленĕ. Анчах та хăйĕн хуçалăхĕн территорийĕнче хуçалăх ертӳçисĕр строительство ĕçĕсене пуçăнма тăхтаса тăнă, ăна чĕнме йышăннă. Вăл тӳрех килĕшмен, çапах та ăна строительство ĕçĕсене пуçланă çĕре хутшăнма ӳкĕте кĕртме май килнĕ...



Çапла вара вĕсем хирте. Ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ Л.С. Софронов, колхоз председателĕсем П.П. Давыдов, В.А. Иванов, механизаторсен бригадирĕ те пĕрле. Строительство ĕçĕсене пурнăçлама вырăнта çапса тухнă шалчасене курсан, Евтихий Андреевич кăмăлсăрланнă: ăна çул 25 метр сарлакăш пулмалли пирки ĕнентернĕ, кунта вара 50 метра яхăн. Вăл çапла каласа хурать: «Çĕр нумай сая каять».

Ăна ăнлантарма пикенеççĕ: строительство вăхăтĕнче илнĕ хура çĕре каялла сарса хураççĕ. Анчах та вăл хăйĕнех тупалать. Çапла вара вĕсем Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз чиккине кайса пăхма тĕв тытаççĕ. Кунта унччен çĕр анлăшне сарас ĕçсем вĕçленнĕ пулнă, хура çĕр сийне те çул хĕррипе сарса тухнă. Çакна кура тăра Евтихий Андреевич механизаторсен бригадирĕнчен хура çĕр сийне çакăнти пекех сарса тухма пултараясси пирки ыйтать. Бригадир ку ĕçсене çакăнтинчен кая мар пурнăçласса шантарать. Пĕр вăхăт шухăша кайса тăнă хыççăн вăл команда парать: «Пуçлăр». Çапла вара Евтихий Андреевич пилленипе пысăк строительство пуçланать. Савăннипе çамрăк ертӳçĕсем Е. Андреева строительство пуçланнине «паллă тума» сĕнеççĕ. Вăл вара вĕсене хĕтĕрсе тăкать. Вырма пынă вăхăтра ун пирки мĕнле калаçу пулма пултартăр. Хыççăн вĕсем уйрăлаççĕ.

Тракторсем çула хăпартма тытăнаççĕ. Çул тăвас ĕçе хăвăртлатма КПСС райкомĕн бюровĕнче пĕр хут кăна мар Ильич ячĕпе хисепленекен колхоза пысăк тиев турттаракан прицеплă Т-150 маркăллă 6 трактор уйăрса парасси пирки ыйту çĕкленĕ. Секретарьте ун чухне В.Ф. Григорьев ĕçленĕ. Ку тракторсене уйăрса панă, Ильич ячĕпе хисепленекен колхоз механизаторĕсен вăйĕпе çак çул валли хăйăрне те, вак чулне те, ытти строительство материалĕсене те сахал мар турттарнă.

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтам звено кадрĕсем çирĕп шайра пулнă. Вĕсем хуçалăхăн çамрăк ертӳçи çине те витĕм кӳмен мар ĕнтĕ. Уй-хир бригадисене пултаруллă йĕркелӳçсем Л.Е. Шаронов, С.Ф. Федотов, П.М. Максимов, И.Е. Егоров ертсе пынă. Кашниех вĕсенчен П.П. Давыдовшăн учитель те, ĕçре пулăшакан та пулса тăнă. Агротехникăри пур çĕнĕлĕхсене те тĕплĕн сӳтсе явнă, пурнăçа кĕртсе пынă. Хуçалăхра пухса кĕртекен тыр-пул тухăçĕ гектар пуçне вăтамран 34 центнерпа танлашнă, тухăç енĕпе хуçалăх районта пĕр хут кăна мар малта тухма пултарнă. Л.Е. Шаронов ертсе пыракан уй-хир бригади вара Гагарин космонавт парнине тивĕçнĕ, делегаци Çăлтăр хулана парне патне кайса килнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси, выльăхсен продуктивлăхĕ те ӳссе пынă. Ку кăтартусемпе хуçалăх кусса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава пĕр хут кăна мар тивĕçнĕ. Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçинче пулнă май çамрăк тата вăй-хал тапса тăракан ертӳçĕ П.П. Давыдов опытлă ертӳçĕсен, ял хуçалăхĕн пултаруллă ертӳçисен ĕç методикине алла илме тăрăшать. Çĕннине, малта пыракан технологи мелĕсене тата çынсемпе ĕçлессин опытне «Знамя труда» колхоз председателĕнчен Евтихий Андреевичран, Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕнчен Алексей Петрович Петровран (ăна халĕ те хăйĕн учителĕ тесе шутлать), Валерьян Семенович Красновран, Сергей Афанасьевич Афанасьевран тата ыттисенчен илни ĕçре пулăшса пынă. Пурте вĕсем ĕç-хĕл пуçламăшĕнче палăрăмлă пулăшу панă.

Çынсем ыйтнине тивĕçтерсе, 1978 çулта Васкассинче хуçалăх шучĕпе ялти Культура çуртне проектласа тăвас ĕçсене тытăннă. Йывăрлăхсене пăхмасăрах колхозниксем, механизаторсем ырми-канми ĕçленĕ, хăйсен умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçланă.

1979 çулхи октябрь уйăхĕнче КПСС райкомĕн бюровĕн йышăнăвĕпе П.П. Давыдова ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ, Муркаш райĕçтăвком председателĕн çумĕ пулма çирĕплетнĕ. Конкретлă хуçалăхра 5 çул ытла ĕçленĕ хыççăн администрацие аппарат ĕçне хăнăхма çăмăлах пулман. Уйрăм хуçалăхра ĕçлес кăмăлах пуçран кайман. Çапла вара 1981 çулта П.П. Давыдов патне «Ударник» совхоз директорĕ Зиновий Михайлович Кутузов пынă. Вăл хăйĕн вырăнне асăннă хуçалăха ертсе пыма сĕннĕ. Ун чухне З.М. Кутузов хăйĕн специальноçĕпе ĕçлеме тытăннă, вăрлăх енĕпе ĕçлекен лабораторие ертсе пыма пуçăннă. Нумая пынă калаçу ăнăçлă вĕçленет. П.П. Давыдов хуçалăх ертӳçинче ĕçлеме килĕшет. КПСС райкомĕн бюровĕ те хирĕç пулмасть, ăна «Ударник» хуçалăх ертӳçи пулса ĕçлеме сĕнет. РФ Ял хуçалăх министерствин «Россемкартофель» пĕрлешĕвĕн 1981 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнчи хушăвĕпе ăна «Ударник» хуçалăх директорĕ пулма çирĕплетнĕ.

1981 çул çăмăл çулталăк пулмасть. Тĕпĕ çанталăка пула тĕш тырă культурисене гектар пуçне 12 центнер çеç пухса кĕртеççĕ. Выльăх апачĕ çитмест, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси чакать... Çакăн пек лару-тăрура ĕçлеме тытăнать хуçалăх ертӳçинче Платон Павлович. «Ударник» хуçалăхра ĕçлеме тытăнсан çамрăк ертӳçĕ тĕш тырă культурисен тухăçне ӳстерме, çĕр улми вăрлăхне туса илессине аталантарма, хуçалăх тупăшлăхне хăпартма тĕв тăвать. Хыççăнхи çулсенче тĕш тырă культурисен тухăçне гектар пуçне 30 центнера е ытларах та, çĕр улмин тухăçне 200 центнера çитерме май килет. Çĕр улмин вăрлăхне 2 пин тонна ытла туса илме тытăнаççĕ.

Ӳсĕм хăй тĕллĕн килмест. Хуçалăхра пĕр шухăшлă специалистсен командине йĕркелени те пулăшать. Вĕсен шутĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономне Иван Тихонович Тихонова (1981–2003 çулсенче ӳсен-тăран отраслĕне ертсе пынă), çĕр улми вăрлăхĕн лабораторийĕн ертӳçине, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономне Зиновий Михайлович Кутузова асăнса хăвармалла. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕне Любовь Алексеевна Соловьева ертсе пынă. Пĕрле ăнланса ĕçленипех ĕнтĕ кашни ĕне пуçне çулталăкра сĕт суса илессине 6 пин килограма çитерме пултарнă. Хуçалăх хура-шурă ăратлă майракаллă шултра выльăх çитĕнтерессипе ăратлăх завочĕ пулса тăнă. Хуçалăхăн рентабельлĕхĕ ӳснĕ, халĕ сăнавпа производство хуçалăхĕ Раççей ял хуçалăх академийĕн тĕп хуçалăхĕсен шутне кĕрет.

Кулленхи производство ыйтăвĕсене татса панипе пĕрлех хуçалăх территорийĕнче пурнăçпа экономика объекчĕсене ĕçе кĕртесси çине те пысăк тимлĕх уйăрнă. Çул-йĕр строительствин программине туса хатĕрленĕ. Ертӳçĕ пуçарулăхĕпе Исетеркке еннелле парăнмалли вырăнтан Йӳçкассине çити 6,5 километр тăршшĕ çула асфальт сарма май килнĕ. Вăл Йӳçкассине район центрĕпе çыхăнтарма май панă. Кунпа çыхăннă тепĕр истори пĕлтерĕшлĕ саманта та асăнса хăвармалла: Йӳçкассинчен Шупашкара автобус маршручĕ уçăлнă.

**(Малалли çитес номерте).**

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Сăпайлăх тата пысăк ăсталăх – пĕр çынра

Муркаш районĕнче сывлăха сыхлас ĕçре пĕр çур ĕмĕр каялла кадрсен ыйтăвĕ çивĕч тăнă. Врачсем направленипе виçĕ çул ĕçленĕ хыççăн туха-туха кайнă. Çитмĕлмĕш çулсен вĕçĕ вара Муркаш тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, вĕренсе ăс пухнă çамрăк врачсем хăйсен тăван районне килнипе паллă. Вĕсенчен пĕри – 1955 çулта çуралнă Геннадий Мефодьевич Огурцов хирург. Муркаш больницине вăл пĕччен мар, мăшăрĕпе – Лина Павловна врачпа – килнĕ.

Ĕçлеме тытăнсанах çак çамрăк хирурга ĕçтешĕсем тăрăшуллă, пуçарулăх, тытăннă ĕçе вĕçне çити çитерме хăнăхни, йывăрлăхсене парăнманни пулнине тӳрех сиснĕ. Çакна кура ĕнтĕ, ĕçлеме тытăнсан тепĕр уйăхранах, çамрăк специалиста районти тĕп больницăн тĕп врачĕ пулма шанаççĕ. Çакăнпа пĕрлех Муркаш больницин çĕнĕ 3 хутлă çуртне туса пĕтересси те унăн хул пуççийĕ çине тиенет.

Анчах шăпах çак ĕçре çамрăк ертӳçĕ хăйне пысăк коллектива пуян опытлă çын пек ертсе пыма пултарнине кăтартса парать. Строительсемпе те кĕске хушăрах пĕр чĕлхе тупать. Больница валли тĕрлĕ оборудовани, аппаратура, сĕтел-пукан тупнаççĕ. Çĕнĕ специалистсем Муркаш больницине килме пуçлаççĕ.

Больницăна хута янă хыççăн вара Геннадий Мефодьевич хирург ĕçĕ валли вăхăт ытларах уйăрать – хирурги уйрăмне ертсе пыма тытăнать. Муркаш районĕнче те пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвĕ (уйрăмах хирурги енĕпе) пултăр тесе ĕçе чунтан пурнăçлакан специалист республикăри, Раççей çĕр-шывĕнчи (ун чух Совет Союзĕ пулнă-ха) тĕрлĕ йышши клиникăсенче ăсталăхне ӳстерет,



сахал мар конференцие хутшăнать. Чăн-чăн хирург пулса тăрасси çакăнтан пуçланать те хастар çамрăкăн.

Ĕçлеме пуçланă чухнехи пĕрремĕш операцие халĕ те астăвать-ха Геннадий Мефодьевич. «Çур çĕр иртни пĕр сехет тĕлĕнче тумалла пулчĕ операцие. Арçыннăн хырăмлăхра язва шыçса кайнине пĕлсе операци кирлине палăртрăмăр. Ун чух наркоз çук, хирургсем те сахал. Вĕсем те тăтăшах ялсене тухса çӳренипе вырăнта пулман. Канмалли кунччĕ. Операцие медсестра пулăшнипе ирттертĕм. Наркозсăрах ĕçлеме тивнĕччĕ», – çапла аса илет хирург Муркаш больницинче алла пĕрремĕш хут скальпель тытнине.

1985-1987 çулсенче мал туртăмлă специалист республика больницинче ординатурăра анлăрах та йывăр операцисене тума вĕренет. Çав вăхăтрах район больницин хирурги уйрăмĕнче çĕрлехи дежурствăсене те çӳрет. Ĕç майне хăнăхма пуçлать.

110-140 талăк больницăра скальпельпе. Хуть те хăш вăхăтра операци тума хатĕр пулмалла. Эпир, медицина ĕçĕпе тӳррĕменех çыхăнманнисем, операци тума пултарайманнисем, тĕрлĕ операцисене йывăр е çăмăл тесе шутласа хаклама пултаратпăр. Анчах хирург тăвакан кашни операци пысăк тимлĕх, нумай вăй ыйтать.

– Хамăн ĕçе эпĕ водитель ĕçĕпе танлаштарма пултаратăп, – тет Геннадий Мефодьевич. – Водительсен те пирĕн пекех ялан тимлĕ, сыхă пулмалла. Операци сĕтелĕ çинче те, çул çинче те малта мĕн пуласси пĕлетĕн-и-ха? Хирургсен те, водительсен те ĕçĕ тепĕр чух çеккунтсенчен килет, – хăй калани пирки тарăнрах шухăшласа вăхăтлăха шăпланчĕ хирург.

Шухăшламалли-шутламалли вара чăнах та пит нумай районĕнче пĕлекен хирургăн. Паянхи кунччен мĕн тĕрлĕ операци тума тивмен-ши унăн? Мĕн чухлĕ çынна çăлнă-ши тата Геннадий Мефодьевич! Операци вăхăтĕнче çĕр тĕпне анса каймалли самантсем пулни пирки те пытармасть вăл. «Хирургсем Турă мар вĕт», – тет. Операци тени вара вăл яланах йывăр, яланах – пысăк ответлăх. Апла пулсан Геннадий Мефодьевичăн ĕçĕ те тем пысăкăш ответлăхлă.

Темĕн йышши операци – пуçтӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таранах – тăваççĕ паян Муркаш больницин хирурги уйрăмĕнче. Çамрăккисем аслисенчен вĕренсе пырасси те пĕр таталмасăрах пулса пырать. Малашне вара, çамрăк хирургсем ĕçлеме тытăннă вăхăтра, аслисенчен, опыт пухнисенчен вĕренсе пыма никам та пулман çав. Анчах Геннадий Мефодьевича та ырă, ĕçре пулăшакан çынсем пулнă: республика больницинче вăй хуракан В.В. Оленин тата Н.А. Мизуров хирургсем. Ординатура та вĕсем патĕнчех иртнĕ ăсталăха ӳстерсе пыракан хирургăн. Вăл вăхăтра Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн министерствинче ĕçленĕ Г.П. Петров аслă хирург хăй вăхăтĕнче çамрăксенчен çирĕп ыйтни те ĕçре яланах пысăк яваплăхлă пулма вĕрентнĕ ăна.

Анчах нумай чух вăл е ку ĕçе пурнăçлассине çамрăк хирургăн хăй тĕплĕн вĕренсе пыма тивнĕ. «Хирург ĕçĕ – коллективлă ĕç», – ăнлантарать районти пуян опытлă хирург. Паян Геннадий Мефодьевичпа юнашар Л.Н. Андреев, С.М. Васильев, Ю.А. Кузнецов, Н.А. Кожевников, А.П. Афанасьев хирургсем вăй хураççĕ. Çĕнĕрен те çĕнĕ йывăр операцисен тăваççĕ вĕсем. Хирурги уйрăмĕ юлашки вăхăтра çĕнĕ оборудованипе пуянланни ĕçре пулăшать. Кунта вара хирурги уйрăмĕн ертӳçи тӳпи те пĕчĕк мар. 1981 çултанпа пĕрле ĕçлекен хирург, халĕ Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тухтăрсем çынсене пахалăхлă пулăшу паччăр тесе нумай пулăшнине калать Геннадий Мефодьевич.

Килте вара, Шаптак ялĕнче, шур халатлă хирургăн пахчи те çуркунне шап-шурах – пан улми йывăççисем кăна сакăр вунна яхăн! Епле илемлĕ, канлĕ пулĕ ĕç кунĕ хыççăн хăв лартса ӳстернĕ йывăççен ытамĕнче! Выльăх-чĕрлĕх те тытаççĕ Геннадий Мефодьевичпа Лина Павловна. Пушă вăхăтра вара кил хуçи шашкăлла выляма та, пулла çӳреме те кăмăллать.

Ку таранччен районти миçе çын тав сăмахĕ каламан пулĕ ăста хирурга: ĕçтешĕсенчен пуçласа чирлисем таранах. Чăннипех те çакăн пек сăпайлăх, çав хушăрах пысăк ăсталăх пĕр çынра пулни сайрарах. «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» ята тивĕçлипех панă ăна. Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви те унăн ĕçне 1999 çулта Хисеп грамоти парса хакланă: ял çыннисене лайăх медицина пулăшăвĕпе тивĕçтернĕшĕн. Муркаш тăрăхĕнче вара çакнашкал хастар çынсем малашне те пулччăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: тĕп больницăри хирургсен ушкăнĕ: Ю.А. Кузнецов, И.М. Ярдыков, В.Г. Данилов, Г.М. Огурцов, Л.Н. Андреев. 1980 çул.**